**9-мĕш класс пĕтерекенсемпе чăваш чĕлхипе экзамен тытма хатĕрленмелли материал**

**1-мĕш вариант**



<table>
<tr><th>Изложени тексчĕ валли/оригинал</th><th>Изложени тексчĕ валли /кăшт кăна улăштарни</th></tr>
<tr><td>

**Пĕрремĕш учитель**

Пĕрремĕш учитель... Унăн ырă та ăслă сăмахĕсем халĕ те хăлхара янăранă пек туйăнаççĕ. Сехечĕ-сехечĕпе итлесе лараттăмăр учителе. Василий Спиридонович пирĕншĕн пурне те пĕлекен, пурне те пулăшакан çын пулнă. Вăл пире вулама, çырма кăна мар, тĕрĕс те йĕркеллĕ пурăнма, пĕчĕкрен лайăх çын пулма вĕрентетчĕ. «Çĕнни йывăррăн килет, ачасем, уншăн кĕрешмелле», – тетчĕ Василий Спиридонович.

Василий Спиридоновичăн сĕрме купăс пурччĕ. Ун кĕввипе пĕрле хавхаланулла юрăсем юрлаттăмăр. Кунсерен пурнăç çине çĕнĕлле пăхма вĕренсе пытăмăр. Вĕрентекен çакна туйса тăратчĕ, апла пулин те лăпланса ларма хушман вăл пире.

Пĕрремĕш учителе эпир кирек хăçан та ырăпа асăнма тивĕç. Вăл пире çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешме, ăнланманнине ăнланма, пĕлменнине пĕлме, халăхпа тан утма вĕрентнĕ. Çакăншăн тайма пуç ăна! *(109 сăм.) (А.Сымокин.)*</td>
<td>Юратнă чăн-чăн вĕрентекен… Унăн ырă та ăслă сăмахĕсем халĕ те хăлхара янăранă пек туйăнаççĕ. Ăна сехечĕ-сехечĕпе итлесе лараттăмăр. Василий Спиридонович пирĕншĕн пурне те пĕлекен, пурне те пулăшакан çын пулнă. Вăл пире вулама, çырма кăна мар, тĕрĕс те йĕркеллĕ пурăнма, пĕчĕкрен лайăх çын пулма вĕрентетчĕ. «Çĕнни йывăррăн килет, ачасем, уншăн кĕрешмелле», - тетчĕ пирĕн юратнă вĕрентекен.<br><br>Василий Спиридоновичăн сĕрме купăс пурччĕ. Ун кĕввипе пĕрле хавхаланулла юрăсем юрлаттăмăр. Кунсерен пурнăç çине çĕнĕлле пăхма вĕренсе пытăмăр. Вĕрентекен çакна туйса тăратчĕ, апла пулин те лăпланса ларма хушман вăл пире.<br><br>Юратнă чăн-чăн вĕрентекене эпир кирек хăçан та ырăпа асăнма тивĕç. Вăл пире çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешме, ăнланманнине ăнланма, пĕлменнине пĕлме, халăхпа тан утма вĕрентнĕ. Çакăншăн тайма пуç ăна. *(111 сăмах) (А.Сымокин)*</td></tr>
</table>

| 1 | ***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.*** |
|---|---|

Изложенири сăмах шучĕ 70-тен кая пулмалла мар.

Изложение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**2-мĕш пай**

**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерĕвĕ.***

Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр.

*(1)Юман нумай çул ӳсет. (2)Ăсчахсен шухăшĕпе, хăш-пĕр юман пин çул таран пурăнать. (3)Вăрманта юман çӳллĕ ӳсет, ирĕкре вара симĕс хытă çулçăсемпе витĕннĕ турачĕсене ытларах сарать. (4)Çуркунне вăл ытти йывăççенчен каярах папка кăларать, кĕркунне каярах çулçине тăкать. (5)Выçлăх çулсенче юман йĕкелне типĕтсе авăртнă, çăнăх тунă.*

Предложенисен грамматика никĕсне тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.

1) *юман ӳсет* (1-мĕш предложени);
2) *çул пурăнать* (2-мĕш предложени);
3) *турачĕсене сарать* (3-мĕш предложени);
4) *вăл кăларать, тăкать* (4-мĕш предложени);
5) *юман авăртнă* (5-мĕш предложени).

**Хуравĕ: ________________________**

**3** ***Пунктуаци тишкерĕвĕ.***

Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

*Васансемпе шырлансенче (1) çĕрĕпе шăнкăртатнă шыв сасси (2) çумне кайăк-кĕшĕк чĕвĕлтетни (3) выльăх-чĕрлĕх ĕнерленипе (4) уçăлса хупăнакан алăк-хапха чĕриклетни (5) йытă вĕрнипе (6) автансем каçса кайса авăтни (7) çынсем çуйхашни (8) тата ытти çĕр тĕрлĕ сасă хушăнать.*

**Хуравĕ: ________________________**

**4** ***Синтаксис тишкерĕвĕ.***

*Ял хĕрринчи çуртăн пысăк чӳречисем* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.

**Хуравĕ: ________________________**

**5** ***Орфографи тишкерĕвĕ.***

**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.**

1) ***аэроçуна*** – мăшăр сăмахсене пĕрле çырмалла;
2) ***уй-хир –*** икĕ хут калакан сăмахсене дефиспа çырмалла;
3) ***пилĕк эрне*** – япала ятне ăнлантаракан хисеп ячĕсенче пĕр хупă сас палли çырмалла;
4) ***вула-ха*** *– ха* междометие яланах дефиспа çырмалла*;*
5) ***Чăваш чĕлхин кунĕ***– уяв ятĕнче малтанхи сăмахне çеç пысăк сас паллинчен пуçласа çырмалла.

**Хуравĕ: __________________________**

**Текста вуласа тухăр та 6-9-мĕш ĕçсене тăвăр.**



(1)Учитель ĕçĕ  пархатарлă та сăваплă. Вăл ачана амăшĕ пекех ĕмĕре чыслă пурăнса irttерме вĕрентет. (2)Ăна хакласа иккĕмĕш анне теççĕ. Кашни ачан ăс-тăн ӳсĕмĕнче, тавра курăм аталанăвĕнче, пултарулăхпа ăсталăх туптавĕнче вĕрентекенĕн тӳпи питĕ пысăк. (3)Пĕчĕк ачаран, вулама-çырма пĕлменскертен, пулас инженер е врач, пуçлăх е ăсчах çитĕнтересси çăмăл мар.

(4)Вĕрентекенĕн еплерех пулмалла-ши? (5)Унăн хăйне ашшĕ-амăшĕ шанса панă ачаран чăн-чăн çын тумалла вĕт-ха. (6)Çакна пултарма вара вĕрентекенĕн хăйĕн чăн-чăн çын пулмалла: ырă кăмăллă, сăпайлă, таса чунлă, пуçарулă, çивĕч, ăслă, талантлă, культурăллă. (7)Вăл кашни ачан пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе, терт-нушипе пурăнать. Кашни вĕренекене хăй ачине юратнă пек юратать, йывăр вăхăтра пулăшать, унпа пĕрле савăнать те, кулянать те.

(8)Пур çыннăн та хăйĕн юратнă вĕрентекенĕ пур. (9)Пĕрисем пĕрремĕш учителе асра тытаççĕ, теприсем пĕр-пĕр предмета вĕрентекен учителе ырăпа асăнаççĕ. (10)Вĕрентекен вăл – пур ачана та, пур çынна та кирлĕ çын.

*(Зинаида Михайлова çырни тăрăх)*

**6** ***Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ.***

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?**

1) Учитель ĕçĕ  йывăр та сăваплă.
2) Ăна хакласа пĕрремĕш анне теççĕ.
3) Вăл кашни ачан пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе, терт-нушипе пурăнать.
4) Пур çыннăн та хăйĕн вĕрентекенĕ пур.
5) Вĕрентекен вăл – пур ачана та, пур çынна та кирлĕ çын.

**Хуравĕ: __________________________**

**7** ***Илемлĕх мелĕсене тишкерни.***

**Танлаштаруллă предложени(сен) номерĕсене кăтартăр.**

(1) Вăл ачана амăшĕ пекех ĕмĕре чыслă пурăнса irttерме вĕрентет.

(2) Кашни ачан ăс-тăн ӳсĕмĕнче, тавра курăм аталанăвĕнче, пултарулăхпа ăсталăх туптавĕнче вĕрентекенĕн тӳпи питĕ пысăк.

(3) Унăн хăйне ашшĕ-амăшĕ шанса панă ачаран чăн-чăн çын тумалла вĕт-ха.

(4) Кашни вĕренекене йывăр вăхăтра пулăшать, унпа пĕрле савăнать те, кулянать те.

(5) Пĕрисем пĕрремĕш учителе асра тытаççĕ, теприсем пĕр-пĕр предмета вĕрентекен учителе ырăпа асăнаççĕ.

**Хуравĕ: __________________________**

**8** ***Лексика тишкерĕвĕ.***

*Пĕчĕк*  сăмахăн (3-мĕш предложени) антонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ: __________________________**

(!) **2-8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

**3-мĕш пай**

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1. «Тавах Сире, вĕрентекен!»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентерĕр: пĕр тĕслĕхне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр.

Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхе предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар. Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан – ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**9.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Вĕрентекен вăл – пур ачана та, пур çынна та кирлĕ çын»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентерĕр.

Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхе предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар. Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан – ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**9.3.** ***Чăн-чăн вĕрентекен*** сăмах майлашăвне Эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Кам вăл чăн-чăн вĕрентекен?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тезис вырăнне Хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) усă курăр: пĕр тĕслехне вуланă текстран, теприне Хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр.

Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхе предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар. Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан – ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**